26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
НОЯБРЬ
2
ЫТЛАРИКУН
218(6455) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

# Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

**Колхозниксемпе колхозницӑсем, совхозсенчи рабочисемпе работницӑсем! Фронтпа ҫӗршыв валли ытларах апат-ҫимӗҫ тата промышленность валли ытларах чӗртавар парса тӑрӑр. Выльӑх-чӗрлӗхсен йышне ӳстерсе пырӑр тата вӗсен тухӑҫлӑхне хӑпартӑр! Фронта пулӑшма, тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкма пӗтӗм вӑя хурар!**

*(Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци пулнӑранпа 26 ҫул ҫитнӗ тӗле ВКП(б) Центральный Комитечӗ чӗнсе каланисенчен)*

## Совет Информаци Бюровӗнчен

### ОКТЯБРӖН 30-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

**Октябрӗн 30-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ДНЕПР шывӗпе СИВАШ ҫыранӗ хушшинчи районра каялла чакакан тӑшмана хӑваласа пынӑ. 15 километртан пуҫласа 35 километр таран малалла куҫнӑ, ГЕНИЧЕСК хулине тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 150 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӗсем хушшинче ПАВЛОВКА, ДЕМИДОВКА, БОЛЬШАЯ БЛАГОВЕЩЕНКА, НОВАЯ ЕЛИЗАВЕТОВКА, ДМИТРИЕВКА, АРТЕМОВКА, ЩЕРБИНА, АСКАНИЯ — НОВА, АГАЙМАН, СУСОЕВКА, ИЛЬИНКА, АЛЕКСЕЕВКА, БУДЕННОВКА, ТИМОФЕЕВКА, ПАВЛОВКА, ПЕТРОВКА, НОВАЯ ГРИГОРЬЕВКА, ЮЗКУИ ятлӑ пысӑк ялсем тата СОКОЛОГОРНОЕ, ЮРИЦИНО ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем пур.**

**ДНЕПР шывӗн кукринче, ДНЕПРОПЕТРОВСКРАН кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, уйрӑм участоксенче 5 километртан пуҫласа 8 километр таран малалла куҫнӑ, Днепропетровск облаҫӗнчи ЩОРСК ятлӑ район центрне тытса илнӗ. Ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти темиҫе пункта йышӑнса илнӗ, вӗсем хушшинче АЛЕКСЕЕВКА, ПЕТРОВСКИЙ, ЖИТЛОВО, СКИЛЕВЕТАЯ ятлӑ ялсем тата БОЖЕДАРОВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗ пур.**

**КРИВОЙ РОГ хули енче пирӗн ҫарсем тӑшман пехотин тата танкӗсен пысӑк вӑйӗсен контратакисене сире-сире янӑ.**

**Фронтӑн ытти участокӗсенче вӑйлӑн разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ артиллерипе миномётсенчен персе тӑнӑ.**

**Октябрӗн 29-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 109 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери тӑшманӑн 28 самолетне персе ӳкернӗ.**

☆ ☆ ☆

Днепр шывӗпе Сиваш ҫыранӗ хушшинчи районра пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, 15 километртан пуҫласа 35 километр таран малалла куҫнӑ. Пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫса пыракан чаҫсем, каялла чакакан тӑшмана ҫав тери хӑвӑрттӑн хӑваласа пырса, халӑх пурӑнакан 150 пункта ытла тытса илнӗ, вӗсем хушшинче Аскания—Нова ятлӑ государственнӑй заповедник пур. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур. Пӗр участокра кӑна пирӗн боецсем 23 танк, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 6 тупӑ, 2 бронетранспортер, 18 хир туппи, 150 автомашина, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ 300 лав, 11 склад, ҫав шутра боеприпассен тата тӗштыррӑн пысӑк склачӗсене тытса илнӗ. Азов тинӗсӗпе Сиваш хӗрринче пӗр соединени чаҫӗсем Геническ хулине штурмласа тытса илнӗ. Кун каҫичченхи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 2.000 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Днепр шывӗн кукринче, Днепропетровск хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Нимӗҫсем хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере, пӗр соединени боецӗсем Днепропетровск облаҫӗнчи Щорск ятлӑ район центрне тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Щорскшӑн ҫапӑҫнӑ чухне гитлеровецсене пӗр батальон ытла пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен 9 танкне тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 туппине персе ҫӗмӗрнӗ. 2 артиллери батарейи, ултӑ кӗпҫеллӗ 6 миномет тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн автоматчиксем контратака пуҫласа янӑ тӑшмана флангран пырса ҫапнӑ та нимӗҫсен пехотине вӗсен танкӗсенчен татса илнӗ. Пирӗн боецсем кӗтмен ҫӗртен пырса ҫапнипе, нимӗҫсен 300 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтнӗ, тӑшман вара, ҫапӑҫу хирне хӑйӗн хӗҫпӑшалне пӑрахса хӑварса, нимӗн йӗрки паллисӗр каялла чакнӑ.

* * *

Кривой Рог хули енче пирӗн ҫарсем тӑшманӑн йышлӑ пехотипе танкӗсен атакисене сире-сире янӑ. Пӗр участокра нимӗҫсем ҫапӑҫӑва пӗр харӑс 100 танк ытла кӗртсе янӑ. Унта пирӗн чаҫсем тӑшмана питӗ хаяррӑн хирӗҫ тӑнӑ, вӗсен 26 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Вара тӑшман кӳршӗри участокра контратака тума пуҫланӑ. Пирӗн артиллеристсемпе бронебойщиксем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янӑ, нимӗҫсен 23 танкне, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 6 туппине пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 1.000 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

Пирӗн авиаци ҫӗр ҫинчи ҫарсене ҫапӑҫма активлӑн пулӑшса пынӑ. Кун каҫиччен сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 20 самолетне персе ӳкернӗ. Совет штурмовикӗсем тӑшманӑн пӗр аэродромне тапаннӑ. Ҫав тапанура нимӗҫсен чылай самолечӗсене пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ.

* * *

Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи участоксенчен пӗринче пирӗн ҫапӑҫакан ҫарсен речӗсене хӳтӗлесе пынӑ чухне Смирнов капитан ертсе пыракан 4 летчик-истребитель сывлӑшра нимӗҫсен 16 бомбардировщикне тата вӗсене хӳтӗлесе пыракан 6 истребительне тӗл пулнӑ. Совет летчикӗсем тӑшмана хӑюллӑн атакӑланӑ. Анисимов летчик, ӑнӑҫлӑн маневр туса, нимӗҫсен «Фокке-Вульф—190» йышши истребительне персе антарнӑ, Смирновпа Козловский летчиксем тӑшманӑн икӗ бомбардировщикне пӗтерсе тӑкнӑ. Вара тӑшманӑн ытти самолечӗсем тарма пуҫланӑ. Нимӗҫсен «Юнкерс» йышши пӗр самолечӗ пирӗн территори ҫине кӗрсе кайнӑ. Смирнов капитан ҫав самолета совет ҫарӗсем тӑракан вырӑна антарса лартнӑ. Нимӗҫ самолечӗн экипажне тыткӑна илнӗ.

* * *

Гомель облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗсем октябрӗн 21-мӗшӗнче, минӑсем лартса, нимӗҫсен фронталла каякан 6 ҫар эшелонне сирпӗнтерсе янӑ, ҫав крушенире темиҫе паровоз тата танксем, автомашинӑсемпе боеприпассем турттарса пыракан 40 платформӑпа вагон ытла ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Ҫав кунах партизансен ушкӑнӗ чугун ҫул станцине кӗрсе кайнӑ та 80 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, 22 автомашинӑна тата чугун ҫул ҫинчи мӗнпур стрелкӑсене сирпӗнтерсе янӑ. Октябрӗн 22-мӗшӗнче совет патриочӗсем шоссе ҫулӗ ҫинче нимӗҫсен 3 танкне, 6 автомашинине сирпӗнтерсе янӑ, 4 кӗпере ҫунтарса янӑ тата пӗр пин метр ытла телеграфпа телефон пралукне тата-тата пӗтернӗ.

* * *

Нимӗҫсен 306-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 580-мӗш полкри 2-мӗш батальонӑн тыткӑна лекнӗ командирӗ Георг Гофман ҫапла каласа панӑ: «Нимӗҫсен Днепр ҫинчи оборонине татса кӗни пирӗн офицерсене хӑратса пӑрахрӗ. Офицерсем нумайӗшӗ ҫапла шутлаҫҫӗ: нимӗҫсен ҫарне Днепр шывӗ ҫинче кӳнӗ поражение Сталинград патӗнчи катастрофӑпа кӑна танаштарма пулать. Юлашки ҫапӑҫусенче пире питех те пысӑк сухатусем кӳчӗҫ. Ман батальонра 4 кун хушшинче 370 ҫын пӗтрӗ. 5-мӗш кунӗнче кӳршӗри чаҫсемпе тата тылпа ҫыхӑнса тӑрасси пачах пӗтсе ларчӗ. Ир енне ман батальона виҫӗ енчен ҫавӑрса илчӗҫ. Эпӗ каялла чакма приказ патӑм. Салтаксем кукуруза хирӗ тӑрӑх шуса каялла чакма пуҫларӗҫ, анчах та эпир кая юлтӑмӑр. Вырӑс автоматчикӗсем пирӗн пӗртен пӗр ҫула пӳлсе лартрӗҫ. Батальонӑн юлашкийӗсене лӳчӗркесе пӗтерсе тӑкрӗҫ. Вара эпӗ салтаксен тата офицерсен пӗр ушкӑнӗпе пӗрле сире хирӗҫ тӑма пӑрахрӑм та тыткӑна парӑнтӑм».

* * *

Краснодар крайӗнчи Пилипково станицинчи ҫынсем Лейко, Евламенко, Ясенев, Бараницкая нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем тунӑ тискер ӗҫсем ҫинчен ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Нимӗҫ бандичӗсем килсе кӗриччен пирӗн станицӑри колхозниксем пуян та культурӑллӑ пурӑнатчӗҫ, нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем колхозниксен пурлӑхне пӗтӗмпех ҫаратса пӗтерчӗҫ. Фашистла ирсӗрсем мирлӗ граждансене темӗн чухлӗ вӗлерчӗҫ, хӗрарӑмсемпе хӗрсене пусмӑрларӗҫ. Гитлеровецсем пирӗн станицӑри П. Черненко, К. Антоненко, И. Шудько колхозниксене тата ыттисене те персе пӑрахрӗҫ. Нимӗҫсем пирӗн станицӑра публичнӑй ҫурт уҫрӗҫ. Ҫав ҫурта, персе пӑрахассипе хӑратса, пирӗн хӗрсемпе хӗрарӑмсене хӑваласа кайрӗҫ. Каялла чакма пуҫласан, фашистсем станицӑри 2 шкула, пурӑнакан 50 ҫурта, 2 сӗт-ҫу фермине, 2 сысна фермине, сӗт заводне тата колхозри ытти хуралтӑсене сирпӗнтерсе е ҫунтарса ячӗҫ. Нимӗҫ факельщикӗсем станицӑна пӗтӗмӗшпех вут тивертсе яма хӑтланчӗҫ, анчах та ӗлкӗреймерӗҫ. Пырса ҫитнӗ совет ҫарӗсем пире нимӗҫсен пусмӑрӗнчен ӗмӗрлӗхех хӑтарчӗҫ. Пирӗн станицӑна ҫав тери хӑвӑрттӑн йышӑнса илсе, совет боецӗсем нимӗҫ факельщикӗсене хӑйсен усал ӗҫӗсене тунӑ вӑхӑтрах тытса илчӗҫ»

### ОКТЯБРӖН 31-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

**Октябрӗн 31-мӗшӗнче ДНЕПР шывӗпе СИВАШ ҫыранӗ хушшинчи районра пирӗн ҫарсем каялла чакакан тӑшмана хӑваласа пынӑ, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла тытса илнӗ. Вӑл шутра Запорожье облаҫӗнчи СИВАШСКОЕ (РОЖДЕСТВЕНКА) тата НОВО-ТРОИЦКОЕ ятлӑ район центрӗсем, НОВО-ПЕТРОВКА, ВЕРХНИЙ РОГАЧИК, ОЛЬГИНО, ЗЕЛЕНЫЙ ПОД, ПЕТРОПАВЛОВКА, КОНСТАНТИНОВКА, КАМЫШАНКА, ЧЕРНОМОРСКИЙ, СЕМЕНОВКА, КОСТОГРЫЗОВО, ГРИГОРЬЕВКА, НОВО-НАТАЛЬЕВКА, ЧАПЛИНКА, ХЛЕБОДАРОВКА, ЯСНАЯ ПОЛЯНА, ВОСКРЕСЕНОВКА, СЕРГЕЕВКА, НОВЫЙ РОГ, ОТРАДА, АЛЕКСАНДРОВКА, ДОГМАРОВКА, НОВО-УКРАИНКА, НОВО-МИХАЙЛОВКА ятлӑ пысӑк ялсем тата ПАРТИЗАНЫ, НОВО-АЛЕКСЕЕВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене тытса илнӗ.**

**ДНЕПР шывӗн кукринче, Днепропетровскран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Вӗсен шутӗнче КУДАШЕВКА, ПОКРОВКА, НАДИЯ, ВОЛТЫШКА, ВЕТРОВКА, АНДРЕЕВКА, МИХАЙЛОВКА, ЖАБОВКА, ДАЛЬНЫЙ ятлӑ ялсем тата КУДАШЕВКА ятлӑ чугун ҫул станцийӗ пур.**

**КРИВОЙ РОГ хули енче пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсем тунӑ контратакӑсене сире-сире янӑ.**

**Фронтӑн ытти участокӗсенче вӑйлӑ разведка тунӑ тата тӑшмана хирӗҫ артиллерипе миномётсенчен персе тӑнӑ.**

**Октябрӗн 30-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 92 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӳлелле перекен артиллери тӑшманӑн 23 самолетне персе ӳкернӗ.**

☆ ☆ ☆

Днепр шывӗпе Сиваш ҫыранӗ хушшинчи районра пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 200 пункта ытла тытса илнӗ. Васкаса тунӑ оборонӑн рубежӗсемпе усӑ курса, тӑшман хӑйӗн йӗркерен тухнӑ ҫарӗсене йӗркелемешкӗн унта чарӑнса тӑма хӑтланнӑ. Пӗр участокра гитлеровецсем контратака тума та хӑтланса пӑхнӑ. Анчах та вӗсен 16 танкне тата 1.000 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ та, вӗсем вара часах каялла чакнӑ. Тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен чаҫсем вирлӗн малалла кайнӑ. Нимӗҫ захватчикӗсенчен Запорожье облаҫӗнчи Сивашское (Рождественка), Ново-Троицкое район центрӗсене тата халӑх пурӑнакан ытти пысӑк пунктсене нумайӗшне ирӗке кӑларнӑ. Ҫавӑн пекех тата пирӗн ҫарсем Партизаны тата Ново-Алексеевка ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене тытса илнӗ. Тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Пирӗн ҫарсем хӑваласа пыракан нимӗҫсем каялла чакаҫҫӗ, хӑйсен артиллерине, боеприпасӗсене, пехотӑн хӗҫпӑшалне тата ҫар пурлӑхне пӑрахса хӑвараҫҫӗ. Нумай гитлеровеца тыткӑна илнӗ.

* * *

Днепр шывӗн кукринче, Днепро-

(ҫӗҫӗ 2-мӗш страницӑра)

## Выльӑх-чӗрлӗх йышне тата унӑн тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстерер!

Октябрӗн 30-мӗшӗпе 31-мӗшӗнче Шупашкарта районсенчи ертсе пыракан работниксен, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекен специалистсемпе малта пыракан колхозниксен республикӑри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пурнӑҫлас тата выльӑхсене хӗл каҫарма хатӗрленес ӗҫсем республикӑра мӗнле пулса пынине пӑхса тухрӗ. Ҫак ыйтупа ЧАССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Малов юлташ доклад турӗ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «Колхозсемпе совхозсенче выльӑх-чӗрлӗх йышне ӳстермелли тата вӗсен тухӑҫлӑхне хӑпартмалли мерӑсем ҫинчен» йышӑннӑ постановление пурнӑҫа кӗртсе, республикӑри колхозсем кӑҫал выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне срокчен тултарнӑ, ӗне выльӑхсем енӗпе — 113,6 процент сыснасем енӗпе — 125,1 процент, сурӑхсемпе качакасем енӗпе — 117 процент пурнӑҫланӑ. 1943 ҫулӑн 9 уйӑхӗ хушшинче ӗне выльӑхсен хисепӗ пирӗн колхозсенче 24,6 процент, сыснасен хисепӗ 26,7 процент, сурӑхсемпе качакасен хисепӗ 30,9 процент ӳсрӗ. Продуктивнӑй выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана республикӑн 22 районӗ ирттерсе тултарчӗҫ. Ҫавӑн пекех республика ӗҫлекен вӑкӑрсем ӳстерес ӗҫе те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать. Республикӑри колхозсем государствӑна аш-какай памалли плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫларӗҫ. Кӑҫал государствӑна аш-какай иртнӗ ҫултинчен 55.790 пӑт нумайрах панӑ. Нимӗҫ оккупанчӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи колхозсен хуҫалӑхне ура ҫине тӑратас тӗлӗшпе партипе правительство йышӑннӑ постановление пурнӑҫласа пырса, Чӑваш республикинчи колхозсем Орел тата Смоленск облаҫӗсене 3050 сурӑх тата 2500 сысна ячӗҫ. Ҫакӑн сӑр пуҫне тата вӗсене валли 800 пуҫ ӗне выльӑх, 2120 сысна, 2100 сурӑх, 2000 чӑх-чӗпе хур-кӑвакал ҫитӗнтереҫҫӗ. Фронтовиксен ҫемьисене чылай пысӑк пулӑшу панӑ. Вӗсен хуҫалӑхӗсене 10 пин пуҫ тӗрлӗ выльӑх-чӗрлӗхпе 15 пин чӑх-чӗп парса пулӑшнӑ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе Элӗк, Шӑхасан, Ишлей, Сӗнтӗрвӑрри, Вӑрнар, Ҫӗрпӳ, Шупашкар, Советски, Вӑрмар тата Канаш районӗсенчи колхозсем пысӑкрах ҫитӗнӳсем турӗҫ. Элӗк районӗнчи колхозсенче кӑҫалхи 9 уйӑх хушшинче ӗне выльӑхсем 35,1 процент, сыснасем 40,7 процент, сурӑхсемпе качакасем 39,1 процент чухлӗ ӳснӗ.

Канашлу республикӑри колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тата вӗсен тухӑҫлӑхне ӳстерес ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине те палӑртрӗ. Вӑл ҫитменлӗхсем пирӗн уйрӑмах лашасен хисепне ӳстерес тата вӗсене пӑхса усрас ӗҫре палӑраҫҫӗ. Октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне республика лашасем ӗрчетмелли плана 95,3 процент тултарнӑ, кашни 100 кӗсре пуҫне кӑҫал пурӗ те 33 тиха ҫеҫ илнӗ. Ҫакӑ вӑл нумай районсемпе колхозсенче лашасем ӗрчетес ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхнӑ пирки пулчӗ. Лашасемпе тумалли ӗҫ нумайланчӗ пулсан та, вӗсене тӑрантарас, пӑхас, чир-чӗртен сыхлас ӗҫ начар пулса пырать. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «Колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне ӳстермелли тата вӗсене пӑхса усрас ӗҫе лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен» йышӑннӑ постановление нумай колхозсенче ӗҫе кӗртмен, лашасемпе усӑ курас ӗҫре халӗ те обезличка пур. Ҫавна пула, кӑҫал чылай районсенче лашасем вилни, чир-чӗрсем сарӑлни палӑрчӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх хисепне ӳстерес ӗҫри тепӗр пысӑк ҫитменлӗх вӑл — ҫамрӑк выльӑхсем чылай вилсе пӗтни пулчӗ. Иртнӗ 9 уйӑх хушшинче ҫуралнӑ выльӑхсенчен республикипе пурӗ пӑрусем — 11,4 процент, сысна ҫурисем — 11,0 процент, путексем — 9,9 процент вилнӗ. Ҫамрӑк выльӑхсем уйрӑмах Кувакино, Красноармейски, Первомайски тата Шӑмӑршӑпа Ҫӗмӗрле районӗсенчи колхозсенче нумай вилсе пӗтнӗ. Ҫамрӑк выльӑхсем вилсе пӗтни вӑл, чи малтан, колхозсем выльӑхсене хӗл каҫарма кирлӗ пек хатӗрленмен пирки, выльӑхсене тӗрӗс пӑхса тӑрантарса усраман пирки пулчӗ.

Темиҫе хут асӑрхаттарнӑ пулсан та, чылай колхозсем халӗ те выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма хатӗрленсе ҫитмен, витесене туса пӗтермен, ӑшӑтмалла туса ҫитермен, апат-ҫимӗҫ хатӗрлемелли плана тултарман.

Хӑшпӗр районсен руководителӗсем, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана район пӗтӗмӗшпе илсен пурнӑҫланипе лӑпланса ларса, хӑшпӗр колхозсем ҫулран ҫулах выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе юлса пынине асӑрхамаҫҫӗ, пур колхозсен фермисенче те выльӑхсем ҫителӗклӗ пулччӑр тесе начар кӗрешеҫҫӗ. Ҫавна пула пирӗн республика кӑҫал фермӑсене валли путексем илес тата хушса панӑ план тӑрӑх пӑрусемпе сысна ҫурисем илсе ӳстерес плана пурнӑҫа кӗртеймерӗ.

Хӑшпӗр районсен тата колхозсен руководителӗсем выльӑхсен хисепне ӳстерессишӗн ытларах тӑрӑшнӑ вӑхӑтрах, вӗсен тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн сахал тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫавна пула пирӗн республика ҫулран ҫулах сӗт суса илмелли, ҫамрӑк выльӑхсем илмелли тата сыснасене самӑртмалли плансене вӗҫне ҫити пурнӑҫласа пыраймасть.

Канашлура Малов юлташ тунӑ доклад тӑрӑх прение 17 ҫын тухса каларӗҫ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри специалистсем, малта пыракан колхозниксем хӑйсен ӗҫӗсем синчен каласа пачӗҫ.

ЧАССР Совнарком председателӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Герасимович колхозсен руководителӗсем фермӑсенче ӗҫлекен работниксене час-часах улӑштарнине, кадрсене ӳстерес ӗҫе чӑрмантарса пынине критиклерӗ. Пирӗн чылай ҫӗрте, фермӑсенче ӗҫлесси ҫине «тупӑшлӑ вырӑн» ҫине пӑхнӑ пек пӑхаҫҫӗ. Кадрсене пӗр сӑлтавсӑр улӑштарса, выльӑх-чӗрлӗхе пӑхас ӗҫе начарлатаҫҫӗ. Ҫакӑн пек тунине тӗпренех пӗтермелле.

Выльӑхсен ӑратлӑхне лайӑхлатса пырас тӗлӗшри ҫитменлӗхсене палӑртса, канашлура Кузьминская юлташ (Ҫӗрпӳри опытлӑ станцин старши научнӑй сотрудникӗ) тухса каларӗ.

Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма хатӗрленес ӗҫри ҫитменлӗхсене вирлӗн критиклесе, канашлура ВКП(б) Обком секретарӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Мартынов юлташ тухса каларӗ.

— Выльӑх-чӗрлӗхӗн хисепӗ ҫулран ҫулах йышлӑн ӳссе пыни пирӗн колхозсенче витесемпе сарайсем ҫӗнӗрен тӑвас ӗҫ анлӑн сарӑлса пынипе ҫыхӑнмалла, — тет Мартынов юлташ. — Анчах ку тӗлӗшпе нумай колхозсем юлашки ҫулсенче нимӗн те туман. Мартынов юлташ колхозсем выльӑхсене хӗл каҫарма хатӗрленсе ҫитнипе ҫитменнине пӑхса тухмалли государственнӑй тӗрӗслӳ хӑшпӗр колхозсенче тӗплӗн пулса иртменнине, хӑшпӗр комиссисем хӑйсен ӗҫне ҫиелтен ҫеҫ тунине палӑртрӗ. Комиссисем кӑтартса хӑварнӑ ҫитменлӗхсене ҫине тӑрсах пӗтерсе пымалла. Выльӑх апатне типтерлӗн тыткаламалла. Лашасене пӑхас ӗҫре йӗркелӗх тумалла.

Канашлу вӗҫӗнче ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ сӑмах каларӗ.

Чарыков юлташ колхозсенче уйрӑмах ама выльӑхсем нумайрах ӗрчетме кирли ҫинчен тата выльӑхсене йӑхӗпе ӑратлӑх енчен суйласа илсе ӗрчетме кирли ҫинчен чарӑнса тӑчӗ. Выльӑх-чӗрлӗхӗн тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшре ҫак факторсем тӗп вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Ӗнесен ӑратне, сурӑхсен, сыснасен йӑхне лайӑхлатассишӗн тимлӗн тӑрӑшмалла. Чарыков юлташ колхозсенче чӑх-чӗп, хур-кӑвакал ӗрчетес ӗҫ ҫулран ҫулах юлса пынине палӑртрӗ. Уйрӑмах хур-кӑвакал ӗрчетес ӗҫ ҫине колхозсен руководителӗсем ҫиелтен пӑхнине сивлерӗ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшре пахаҫитӗнӳсем тунӑшӑн колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлемелли закона тӗплӗн пурнӑҫа кӗртсе пымалла. Фермӑсене комплектлама ҫамрӑк выльӑхсем илмелли плана ноябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне тултармалла. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана ҫине тӑрсах ирттерсе тултарса, Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне республика аллинчех хӑварассишӗн кӗрешмелле. Ҫамрӑк выльӑхсене уйрӑм витесенче уйрӑмах лайӑх пӑхса усрамалла.

Канашлу ферма работникӗсене, ял хуҫалӑх ӗҫӗнчи специалистсене ҫамрӑк выльӑхсене нумайрах илмелле тӑвассишӗн, выльӑхсене самӑртас ӗҫе тӗпренех лайӑхлатассишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарма чӗнчӗ. Нумай сӗт паракан ӗнесене кашни фермӑрах уйӑрса тӑратмалла, вӗсен сӗтне сӑвас ӗҫе йӗркелемелле.

Кашни ӗҫ лашинех уйрӑм колхозник ҫумне ҫирӗплетмелле, вӑл лашапа ҫирӗплетнӗ колхозник ҫеҫ ӗҫлемелле.

Кашни колхозрах выльӑх-чӗрлӗхе пӑхакансен ӗҫне ҫӗклеме стахановла шкулсем, зоотехника кружокӗсем организацилемелле, ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи кашни специалист виҫ-тӑватӑ колхозра кадрсем вӗрентсе хатӗрлемелле.

Колхозсем кӑҫалхи тупӑша валеҫме тытӑнас вӑхӑт ҫывхарать. Колхозсен правленийӗсем, ҫӗрӗҫ органӗсемпе специалистсем колхозсен учет ӗҫне пӑхса тухмалла. Ӗҫшӗн хушса тӳлемелли ҫынсене палӑртмалла, ку закон мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине сӑнаса тӑмалла.

Канашлура ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ Белков, ЧАССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ Андреева, ЦК ВКП(б) ҫумӗнчи КПК Уполномоченнӑйӗ Серов, ЧАССР Совнарком Председателӗн Заместителӗ Семенов тата ытти юлташсем те пулчӗҫ.

### *Укҫапа япаласен 3-мӗш лотерейи*

## 29 миллион та 451 пин тенкӗлӗх сарнӑ

Октябрӗн 31-мӗшӗ тӗлне укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейин билечӗсене республикӑра 29 миллион та 451 пин тенкӗлӗх сарнӑ. Укҫине 21 миллион та 249 пин тенкӗ пухнӑ. Уйрӑммӑн илсен, лотерея билечӗн укҫине рабочисемпе служащисем хушшинче 1.144.000 тенкӗ, колхозниксем хушшинче 20.101.000 тенкӗ пухнӑ.

Лотерея билечӗсен укҫине пухасси Сӗнтӗрвӑрри, Октябрьски, Ишлей, Вӑрмар районӗсенче ӑнӑҫлӑн пырать. Тӑвай, Калинино, Ҫӗмӗрле, Шӑмӑршӑ районӗсем халӗ те кайра пыраҫҫӗ.

## Укҫа пухассине хӑвӑртлатмалла

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрӗн 28-мӗшӗ. **(Телефонпа, хамӑр корр.).** Рабочисемпе служащисем, колхозниксемпе колхозницӑсем укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейин билечӗсене 1.020.000 тенкӗлӗх ҫыраннӑ. Анчах та укҫа пухасси юлса пыратьха. Ку тариччен пурӗ те 690.000 тенкӗ ҫеҫ пухнӑ.

Лотерея билечӗсен укҫине пухасси «Большевик», «Смычка», «Сталь» колхозсенче начар пырать. «Большевик» колхозра 40.000 тенкӗлӗх ҫыраннӑ. Ку тариччен пӗр пус та хывман-ха.

Районри партипе совет организацисен, ялсоветсемпе колхозсен председателӗсен тата активистсен лотерея билечӗсен укҫине пухас тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлемелле

## Ялхуҫалӑх ҫулӗн отчетне тума хатӗрленеҫҫӗ

ШАХАСАН. Шывпуҫ Чуракассинчи Шмидт ячӗпе тӑракан колхоз, агротехника кӑтартӑвӗсене ҫирӗп пурнӑҫа кӗртсе пырса, кӑҫал тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗ. Вӑтам шутпа кашни гектартан ыраш — 10,5 центнер, тулӑ —13 центнер, пӑри—10,5 центнер, урпа—23 центнер тухрӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем тырпула вӑхӑтра пухса кӗртессишӗн ырми-канми ӗҫлерӗҫ. Ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӗҫлемелли фронтовой уйӑхлӑхра ӗҫ тухӑҫлӑхӗ татах ҫӗкленчӗ. Авӑна октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне ҫапса пӗтерчӗҫ, государство умӗнчи обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫларӗҫ.

Халӗ колхоз правленийӗ 1943-мӗш ялхуҫалӑх ҫулӗн итогне тума хатӗрленет. Малтанхи даннӑйсем тӑрӑх, колхозниксем кашни ӗҫкунӗ пуҫне 2,5 килограмм тырӑ илмелле.

**Агроном А. НИКИТИН.**

# Совет Информаци Бюровĕнчен

**ОКТЯБРĔН 31-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ**

петровск хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пĕр соединени чăçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Кудашевка ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ. Çав станцишĕн çапăçнă чухне нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тытăнă илнисем пур. Пирĕн тепĕр соединени, тăшман пехотине танкĕсен тупă контратакăсене сире-сире ярса, нимĕçсене вăйлă çирĕплетнĕ темиçе ялтан çапса кăларнă. Гитлеровецсене пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ, 4 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 3 тупă тата 10 хир туппи пĕтерсе тăкнă. Днепр çинчи пĕр участокра нимĕçсем пирĕн çарсен тылне десант антарма хăтланнă. Пирĕннисем тăшман шухăшне пултарнатнă. Пирĕн боецсем нимĕçсен 500 автоматчикне ытла пĕтерсе тăкнă тата лодкăсемпе катерсене шыва путарнă. Юсавлă виçĕ катерне, моторлă 3 лодкине тата ытти трофейсене те тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем тăшман çарĕсене пыра-пыра çапнă, 100 автомашинăна çити, темиçе бензозаправщика, боеприпассен 3 складне тата 2 горючи складне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кривой Рог хули енче пирĕн çарсем тăшман контратакăсене сире-сире янă. Нимĕçсем пĕр ансăр участокра хăйсен пехотин пысăк вăйĕсене тата темиçе танковăй дивизине илсе пынă та вĕсене контратакăна кĕрте-кĕрте ярассĕ. Çав çапăçусенче тăшман çарне пысăк çухату кÿрерĕç. Пирĕн гвардеецсем пĕр соединени участокĕнче кăна тăшманăн 30 танкне пĕрсе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем нимĕçсен 14 танкне 40 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Пĕр чăрăш танкистсем икĕ кун хушшинче тăшманăн пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă. Çав çарăсура Романов лейтенантăн танковăй роти чапа тухнă. Вăл ăнăçлăн маневр туса, нимĕçсен тылне тухнă та, кĕтмен çĕртен пырса çапса, тăшмана çĕнтернĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен 18 нимĕç самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Пирĕн карапсем Финн залевĕнче тăшман тральщикне шыва путарнă.

* * *

Калинин облаçĕнчи районсенчен пĕринче хĕрĕхсен партизансем отрячĕ темиçе кун хушшинче нимĕçсем фронтальла пулăшу, боеприпассем тата апат-çимĕç турттарса тăра-

кан шоссе çулĕ çинче 40 кĕпере пĕтерсе тăкнă. Засадăсенче персе, 126 гитлеровеца вĕлернĕ. Калинин облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ тăшманăн 2 çар эшелонне ÿпĕтерсе янă. Çав крушенисенче боеприпассем турттарса пыракан 40 вагона çити çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ е çиленнĕ.

* * *

Нимĕçсен 12-мĕш танковăй дивизийĕнчи 25-мĕш мотополкăн 3-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Вальтер Мак çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи нимĕç çарĕсем июль уйăхĕнче Курск хулине тапăннă çĕрте пулнă. Дивизи çав наступленире пысăк çухату тÿсрĕ, вара унăн каялла чакма тиврĕ. Днепр патне чакса пынă чухне пире офицерсем çапла каларĕç: «Унта тупă укрепленисене никам та çĕнтерсе илес çук», терĕç. Рота командирĕ Тильс лейтенант çапла каларĕ: «Днепр шывĕн сылтăм енче эпир хамăра йĕркене кĕртĕпĕр те хĕл каçăпăр», терĕ. Çапăçусем пынă май пирĕн çакна курмалла пулчĕ: вырăнсене нимĕнле укреплениисем те тăман пултăраймасть. Вырăссем Днепр шывĕ урлă каçма кăна мар, ... та, Днепрăн сылтăм енче ... çухатусем курĕç. Мĕн пулса иртнине пирĕн салтаксем ăнланма пултараймаççĕ. Вĕсене кунран куна пирĕн рубежсене çĕрĕсем илме çук тесе ĕнентерееççĕ, çав вăхăтрах вĕсем пĕр оборона тăрăх хыççăн теприне тытса пама ... Офицерсен шухăшне пирĕн салтаксем ... лейтенант нумай ... : «Унта ... çухатăпăр», терĕ ...»

* * *

Полтава облаçĕнчи Миргород районĕнчи Большая Обуховка тата Бакумовка ялĕсенче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем ытла та тискер ĕçсем турĕ. Гитлера пуçкасакансем Большая Обуховка ялĕнче виçĕ кун хушшинче кăна 370 совет гражданине персе пăрахнă. Нимĕçсем, килтен киле çÿресе, кама тупнă çавсене пурне те вĕлерсе пынă, фашистла бандитсем 150 пурăнмалли çурта çунтарса янă. Бакумовка ялĕнче гитлеровецсем старикене тата хĕрарăмсене 37 сынна персе вĕлернĕ те ... кайнă, вара вĕсене Хорол шывĕ хĕррине-хĕрринче автоматпа персе пăрахнă.

*Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту*

### ВЦСПС-па ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи вăрман сыхлакан тата йывăçсем лартас тĕлĕшпе ĕçлекен Управлени

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи вăрман сыхлакан тата йывăçсем лартас тĕлĕшпе ĕçлекен Управлени, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943-мĕш çулхи итогĕсене пăхса тухса, **Вăрнарти вăрман хуçалăхне** (директорĕ Григорьев юлташ) виççĕмĕш преми пама йышăннă.

### Канашри чугун çул училищинче

Канашри чугун çул училищинче вĕренекенсем Октябрь уявне çитĕнÿсемпе паллă тăвассишĕн тăрăшаççĕ. Кунта кашни вĕренекен, çавăн пекех тата кашни вĕрентекен ăмăртса ĕçлеççĕ. Мельников, Григорьева, Александров, Голут, Гаврикина, Борзикова юлташсем ĕç нормине 200-шер процентран кая мар тултараççĕ. Паллă стахановец Кащеев нормăна 360 процент, Окунев, Андронов тата ытти юлташсем те нормăна 150—200-шер процент таран тултараççĕ.

Производствăри стахановецсем Ленинла-Сталинла комсомол ретне кĕреççĕ. Октябрь уйăхĕнче комсомол ретне 20 çамрăка йышăннă тата 20 çамрăк заявлени панă. Комсомолз кĕнисем хушшинче — Никольский Касяков, Алексеев, Семенова, Зубов, Захаров юлташсем. Вĕсем нормăна 150—200-шер процент тултараççĕ.

Училищĕре малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене панă. Хисеплĕ грамотăсем Тюлягин, Валетов тата ытти юлташсем — пурĕ 17 çын илнĕ. Унсăр пуçне Абрамов, Чураков, Жолток, Наливайко, Родионова, Афанасьев тата ытти чылай юлташсене Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи ĕç резервĕсен Управленийĕ «Отличник» значокпа наградăланă.

Училище коллективĕ боецсем валли ăшă япаласем илме 2000 тенкĕ, фронтовиксен çемьисене пулăшма 720 тенкĕ укса пуxса панă.

Д. ИВАНОВ.

### Хĕрлĕ Çарăн генералĕсене, офицерĕсен, сержанчĕсен тата рядовойĕсен составне Совет Союз Геройĕн званине пани

Днепр шывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн, Днепр шывĕн хĕвеланăç енчи плацдарма лайăх çирĕплетнĕшĕн тата çав ĕçсене хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943 çулхи октябрĕн 29-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар генералĕсене, офицерĕсене, сержанчĕсене тата рядовой боецĕсене, мĕн пурĕ 117 сынна, Ленин орденĕпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградăласа, Совет Союз Геройĕн Званине панă. (ТАСС).

# Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне хамăр алăра çирĕп тытар!

Ÿкерчĕк çинче: Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакан П. Е. Емельянов юлташ. Вăл фермăра 5 çул хушши ĕçлет. Кăçал вăл пăхакан кашни сурăхран 3400-шер грамм çăм касса илнĕ. Ăна ĕçшĕн темиçе килограмм çăм хушса тÿлеççĕ.

Н. ДАНИЛОВ фото-ÿкерчĕкĕ

## *Лашасен йышне ÿстерессишĕн*

Лашасен йышне çулран çул ÿстерсе пыма партипе правительство колхозниксене лайăх майсем туса пачĕç. «Колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне ÿстермелли тата вĕсене пăхса усрас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх, кĕсресене пăхакан конюха кашни 10 кĕсререн 6 тиха илсе вĕсене 5—6 уйăх хушши пăхса ÿстернĕшĕн кашни тихашăн 15-шер килограмм тĕштырă хушса тÿлеççĕ. Çавăн пекех конюхсем хăйсене çирĕплетсе панă кĕсресенчен 60 процентран ытларах илсе ÿстернĕ кашни тиха пуçне 30-шар килограмм тĕштырă хушса илеççĕ.

Партипе правительство конюхсене ĕçшĕн хушса тÿлемелле тунине шута илсе, пирĕн Ишлей районĕнчи колхозсенче конюхсем кăçал лашасен йышне ÿстерессишĕн, вĕсене лайăх пăхса усрассишĕн тимлĕн ĕçлерĕç. Нумай конюхсем кĕсресене пĕтĕлентерес, çамрăк тихасене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе паха ситĕнÿсем турĕç.

Кибечкасси ялсоветĕнчи «Большевик» колхозра кĕсресене пăхакан конюх Пайманов юлташ кăçал хăйне çирĕплетсе панă 8 кĕсререн 8 тиха илсе пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ÿстерчĕ. Пайманов юлташа кăçал çакăншăн кашни тиха пуçне 30-шар килограмм, пурĕ 150 килограмм ытла тĕштырă хушса параççĕ. Вăл çулран çул лашасене лайăх пăхса усранине тата лашасен йышне ÿстерессишĕн тăрăшнине шута илсе, ССР Союзĕн Наркомземĕ Пайманов юлташа «Ялхуçалăх отличникĕ» значок панă.

Шетмĕпуçĕнчи «Çĕнĕ хунав» колхозăн конюхĕсем те лашасен йышне ÿстерессишĕн тимлĕн тăрăшрĕç. 14 кĕсререн вĕсем кăçал 14 тиха илсе, пурне те сывă пăхса ÿстерме пултарчĕç. Вăл шутра старши конюх Р. Егоров юлташ 7 кĕсререн 7 тиха илсе пăхса ÿстернĕ. Егоров юлташ çакăншăн ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх 100 килограмм ытла тĕштырă илет.

Çакăн пек тĕслĕхсем районра кăçал чылай. Конюхсем лашасене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленчĕç. Лашасене усрама апат-çимĕç çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ.

А. КАЗАКОВ,
Ишлей райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникĕ

## *Ферма—колхоз тупăшĕн çăлкуçĕ*

Элĕк районĕнчи Вите-Çÿч 30 хуçалăхлă пĕчĕк ял. Хăйсен колхозне вĕсем «Шуçăм» тесе чĕнеççĕ.

«Шуçăм» колхоз — çирĕп колхоз. Çулсеренех колхозниксем тырпул, пахча-çимĕç, çĕрулми тухăçлăн ÿстерсе, çителĕклĕ чухлĕ валеçсе илеççĕ. Анчах «Шуçăм» колхоз районра сысна ĕрчетес енĕпе ытларах палăрса тăрать. Фермăн заведующийĕ —ватă колхозник Антон Мартынович Мартынов юлташ.

1942 çулта фермăра кашни амана икĕ хутчен çăвăрлаттарнă, кашнинчен 16,4-шар çăвăр илнĕ. Кăçал та 7 ама икшер хут çăвăрласа, мĕн пурĕ 140 çăвăр туса панă. Вăл шутран иккĕшĕ çеç вилнĕ, ыттисем пурте аван ÿссе çитĕннĕ. Ферма кăçал кашни ама сыснаран 19,7-шар çăвăр илсе ÿстерчĕ.

Юлашки икĕ çул хушшинче çак пĕчĕк ферма государствăна 50 пуç сысна пачĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсен сывлăх фондне тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма сыснасем чылай панă.

Нумаях пулмасть, «Шуçăм» колхоз патшалăха 1944-мĕш çулшăн аш-какай парса татрĕ. Обязательнăй йĕркепе 709 килограмм пачĕ тата Хĕрлĕ Çар фондне 267 килограмм аш-какай хыврĕ.

А. ТРОФИМОВ.

### Выльăхсем ăшă витесенче

СЕНТЕРВАРРИ. Шуркассинчи Киров ячĕпе тăракан колхозăн фермисенче кăçал 102 пуç ĕне-пăру, 120 пуç сысна тата сурăхсем, чăх-чĕппе хур-хăвакал йышлăн пурăнмалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана кăçал колхоз ирттерсе тултарчĕ. Государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, тирпе çăм тахçанах парса татнă.

Пысăк ĕç турĕç кăçал фермăсенче ĕçлекен колхозниксем. Выльăх-чĕрлĕх витисене юсама колхозран ĕç вăйĕ ыйтмарĕç вĕсем. Хăйсемех витесене юсарĕç, ăшăтрĕç, шурă тăмпа шуратрĕç, никĕссене хăпартрĕç. Чÿречесене юсарĕç, урайсене тикĕслетрĕç, апат памалли вырăнсемпе хатĕрсене юсарĕс тата сĕнĕрен турĕç.

12 çын вăхăта шута илмесĕр ĕçлерĕç. Выльăхсене таса та ăшă витесенче хĕл каçармалла турĕç. Хĕле хатĕрленес ĕçе фермăсен заведующийĕ Павлов юлташ ертсе пычĕ, выльăхсене пăхакан Белова, пăрусене пăхакан Фомина, доярка Петрова юлташсем уйрăмах тимлĕн ĕçлерĕç.

Выльăхсене çитерме утă, клевер тата вика ути кирлĕ таранах хатĕрленĕ. Вĕсене пурне те ферма çывăхне турттарса пынă, фермăсен заведующийĕне старши конюха актсемпе çирĕплетсе панă, вăл шутран виççĕмĕш пайне лашасене тата ĕçлекен вăкăрсене çураки вăхăтĕнче ситерме уйăрса хунă.

Фермăсенче ĕçлекенсен вăйĕпе кăçал сыснасем валли 7 тонна йĕкел пуçтарнă. Киров ячĕпе тăракан колхоз правленийĕ фермăсенче ĕçлекенсене тăтăшах пулăшать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçпе яланах тĕплĕн интересленет. Çавăнпа та кунта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çулсеренех ăнăçлăн пулса пырать. Выльăхсене пăхакансем хăйсен ĕçне ответлăха туйса туса пыраççĕ.

С. АЙДАР.

### Патшалăха самăртнă сысна какайĕ параççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем патне кучченеç яма-и, е патшалăха какай парса татма-и, — Йĕпремри «Чамыш» колхоз сыснасене яланах самăртса пусать. Çавăн пек тумалла та.

«Чамыш» колхоз патшалăха 1943 çулшăн аш-какай тахçанах парса татнă. Вăл сысна какайĕ панă тата пули-пулми сысна какайĕ мар, самăртса пуснă çуллă какай панă.

1944-мĕш çулта колхозăн патшалăха аш-какай 8 центнера яхăн памалла. Самăртмасăр пуссан, кашни сысна 65-шер килограмм туртать пулсан та, çав плана тултарма 12 сысна кирлĕ пулĕччĕ. «Чамыш» колхоз 8 сысна çеç расходларĕ. 50—60-шар килограмм туртакан 8 сыснана вĕсем пĕр уйăх хушши уйрăм пăхса самăртрĕç. Çак вăхăт хушшинче сыснасем кашни 90 — 100-шер килограмм туртакан пулчĕç. Апачĕ — юман йĕкелĕ пулчĕ. Çапла вара, çак сыснасене пусса парса, колхоз аш-какай памалли 1944-мĕш çулхи обязательствăна 105 процент пурнăçларĕ, патшалăха срокчен лайăх какай пачĕ.

С. ШАДИН.

# Ют çĕршывсенче

### РУЗВЕЛЬТ ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт президент хаçат-журналсен представителĕсене çапла каланă: Мускаври конференцире ыйтусем тăрăх каласса килĕшнĕ, эпĕ пусмалли кăна юлнă. Рузвельт çакна кăтартса панă: Россия ытти патшалăхсемпе вăрçă хыççăн килĕшсе туслă ĕçлесе пырĕ тесе эпĕ шанса тăнине Мускаври конференцин результачĕсем лайăх çирĕплетсе пачĕç, тенĕ. Рузвельт сăмахĕ тăрăх, конференци результачĕсем çав тери пысăк. Вĕсем конференци кун йĕркинчи ыйтусем тăрăх килĕшсе çитнинче кăна мар, конференцире çав тери кăмăллă атмосфера тăнинче те палăрса тăраççĕ. Вăл атмосфера питĕ лайăх пулнă. Ку тĕлĕшпе, тенĕ Рузвельт, США-н государственнăй секретарĕ Хэлл нумай ĕçленĕ, анчах та Российăпа Англия та савăн чухлех нумай ĕçленĕ.

Рузвельтран: конференцин тĕллевĕ мĕнле пулнă? тесе ыйтнă. Рузвельт çак ыйтăва хирĕç çапла каланă: чи паллă тĕллев вăл—мирлĕ пурнăç тăвасси тата пĕтĕм тĕнчери агрессие пĕтерсе лартасси, тенĕ. Малалла Рузвельт çапла каланă: пур конкретнăй ыйтусем тăрăх та килĕшсе таталнă, çавăн пекех тата пĕтĕмĕшле политика тĕлĕшпе те ыйтăва татнă, анчах та конференци участникĕсем хăшпĕр ыйтусем тăрăх вĕçне çитиччченех каласса таталайман, тенĕ.

США сеначĕ—малашне вăрçă ан пултăр тесен, США-н малашне ытти патшалăхсемпе килĕшсе ĕçлемелле, тесе кăларас деклараците Рузвельт ырланă. Халĕ сенатра Коннэли резолюцине сÿтсе-яваççĕ. Рузвельт çав резолюци сителĕкли синчен калама килĕшмен

Тепĕр ыйтăва ответлесе, Рузвельт çапла каланă: конференци участникĕсем пурте çак вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăнхи вăхăтра пĕр шухăшлă пулса ĕçлемелле тăвасшăн тăрăшаççĕ. Тĕп тĕллев—малашне мĕн тумалли çинчен каласса татăласси пулнă.

США-н тулашри политики çинчен каласа кăтартма ыйтнине хирĕç Рузвельт çапла каланă: халĕ сенатра пĕтĕмĕшле резолюцие сÿтсе-яваççĕ, эпĕ хам çавăн пек резолюцие ырлатăп, тенĕ. Президента çакăн пек йывăр ыйту панă: «США, Англия тата Россия Мускаври конференциччченех пĕтĕмĕшле политикăран ытларах конкретнăй политикăпа сыхăнса тăнă пулсан, вара çав конференци мĕн пирки кирлĕ пулнă-ха?» — тесе ыйтнă. Рузвельт çапла ответ панă: конференцие пула икĕ енĕ те нумай япалана тĕппипе пĕлсе çитнĕ, лайăх идейăсемпе паллашнă тата конференцире сĕтел хушшинче ларса, пĕр-пĕринпе лайăх паллашса çитнĕ, тенĕ. Мĕнле конкретнăй документсем туса çитерни çинчен тата мĕнле килĕшÿсем туни çинчен Рузвельт каламан. Вăл çапла каланă: çав документсемпе килĕшÿсене хăй вăхăтĕнче пĕлтерĕç, вĕсене Мускавра пĕлтереççĕ пулмалла, тенĕ. Анчах та вăл малалла çапла каланă: конференци членĕсем пур ыйтусене те лăпкă атмосферăра сÿтсе-явнă. Пĕр-пĕрин хушшинчи туслăх, президент каланă тăрăх, «çĕр процентпе тенĕ пекех лайăх пулнă».

## Пĕлтерÿ

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) докладчиксем, пропагандистсем, агитаторсем тата беседчиксем валли **«Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни»** ятлă темăпа ушкăнлă консультаци пулать.

Консультацие старши лейтенант **Мошнин** юлташ ирттерет.

**ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.**

**Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ДОНОРСЕНЕ ноябрь уйăхĕнчен пуçласа çăкăр карточкисем çĕнĕ справкăсем тăрăх параççĕ. Кивĕ справкăсене çĕнисемпе улăштармалла. Çав çĕнĕ справкăсене юн илекен станцире улăштарса параççĕ.

ШУПАШКАРТИ ЮН ИЛЕКЕН СТАНЦИ КАРТОЧКА БЮРОВĔ

ЗАВОДРА ĔÇЛЕМЕ çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: экономист, секретарь-машинисткăсем, бухгалтери работникĕсем, кладовщиксем, фотограф.

Чугун çул çинче ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекен арçынсемпе хĕрарăмсем кирлĕ: поезд составителĕсем, сцепщик-стрелочниксем, постра тăракан дежурнăйсем, вагон осмотрщикĕсем, çулсене юсакан рабочисем.

Тата токарьсем, фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, кальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, строительнăй рабочисем, грузчиксем, возчиксем, прачкăсем, подсобнăй рабочисем тата уборщицăсем кирлĕ.

Арçын е хĕрарăм вахтерсем (охранниксем) кирлĕ. Вĕсем валли общежити пур тата спецтумтир параççĕ.

Çавăн пекех тата тĕрлĕ специальноçсем тăрăх переквалификантсене (15 çул тултарнă е унтан аслăрах ушкăнсене) илеççĕ.

11 сехетрен пуçласа 15 сехет çитиччен çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, бюро пропусков.

# Хунавлă ферма

— Ăнăçсах пĕтет-и ара? — тенĕ сысна фермине организациленĕ чухне иккĕленекен çынсем. Анчах пĕрлешÿллĕ вăя шанакан колхозниксем вĕсен сăмахне итлемен, фермăна организациленĕ.

Малтанах фермăра 5—6 сысна кăна пулнă. Вĕсене усрама вите пулман. Колхозниксем патĕнче тăнă.

— Вăл 1934 çултаччĕ, — каласа парать свинарка Вазикова Фекла. — Унтанпа тăхăр çул иртрĕ ĕнтĕ, ферма палламалла мар улшăнчĕ. Пысăк хуçалăх пулса тăчĕ.

Чăнах та, халĕ фермăна хăйне тепĕр колхоз темелле. 150-шар сысна хупмалли икĕ вите. Вĕсенче пурĕ 171 сысна.

Ферма кунçулĕ пĕтĕмпех Фекла Вазикова ячĕпе çыхăннă. Мĕн фермă пуçланнăранпах сыснасене пăхать вăл. Юратать хăйĕн ĕçне Вазикова юлташ.

Ку ахальтен мар. Ферма ăна çын ретне тăратнă, чапа кăларнă. Лайăх ĕçленĕшĕн Вазикова юлташ темиçе хут та преми илнĕ, 1939 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине тăнă. Выставка комитечĕ ăна пĕчĕк кĕмĕл медальпе наградăланă.

— Çакăн хыççăн манăн ĕçлес кăмăл татах çĕкленчĕ. Манăн ĕç те усăллине ăнлантăм эпĕ, — тет Вазикова.

Вазикова юлташăн ĕçĕ çулран çул тухăçлăрах пулнă. 1941 çулта вăл кашни амаран вăтамран 12,5 çăвăр, 1942 çулта — 17,6 çăвăр илнĕ. Кăçал Вазикова 8 ама пăхать. Çав амасенчен ку таринччен 162 çăвăр пăхса илнĕ, кашни амаран вăтамран 20,25 çăвăр илнĕ. Пĕр çăвăр та вилмен, пурне те пăхса çитĕнтернĕ. Вăл хăйне панă планран 50 çăвăр ытлашши илнĕ. Ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх, çав пилĕк теçеткерен вуннăшне Фекла хăй илет.

Аратлă сысна çулталăкра икĕ хут çăвăрлать, теççĕ. Вазикова юлташăн иккĕ мар, виçĕ хут çăвăрлаççĕ. Йоркшир аратлă «Снежинка» ятлă ама кăçал икĕ хут çăвăрланă: пĕрре — 14, тепре — 16, пурĕ — 30 çăвăр пулнă. «Снежинка» ун хыççăн татах пĕтĕленнĕ. Виççĕмĕш хут декабрьте çăвăрлать.

— Сысна — тухăçлă выльăх. Анчах вăл ĕрчесси пăхнинчен килет. Мĕнле пăхатăн, çавăн пек тупăшне илетĕн, — тет Вазикова юлташ.

«Сысна çăвăрласса эпĕ 2—3 кун малтан кĕтетĕп. Çăвăрланă чух асăрхаса тăратăп. Çурисем мĕнле: чиперех-и, сывă-и? Тин çеç çăвăрланнă çăвăрсене уйрăм корзинка ăшне илетĕп. Амăшĕ таптаса е вырăса вĕлересрен сыхлатăп. Çăвăрсене тĕреклетнеччен уйрăм тытатăп, ĕмме çеç амăшĕ патне яратăп. Унсăр пуçне çăвăрсем ытлашши нумай пулсан, чĕчĕрен ытлашшисене сахал çăвăрлă тепĕр ама патне яратăп», — каласа парать Вазикова. Эрне е икĕ эрне иртсен, вăл çăвăрсене ытти çимĕç пама пуçлать. Амăшĕн сĕтне сахал ĕмекенсене ĕне сĕчĕ парать. Виççĕмĕш эрнерен вара урпа кĕрпинчен сĕтпе пĕçернĕ пăтă тата тырă пĕрчисем çиме вĕрентет. Тĕреклениĕ çăвăрсене талăкра 5—6 хут тăрантарать.

Кунта сысна çурисене сапропель параççĕ. Сапропель тесе кÿлĕ тĕпĕнчи лачакана (йăлкана) калаççĕ. Çĕрĕк курăклă, чĕрчун виллиллĕ йăлка çамрăк сыснасемшĕн усăллă. Йăлкари минералсем сысна çурисене тĕреклентме пулăшаççĕ, чир-чĕртен сыхлаççĕ. Сыснасене пăхнă çĕрте тата кĕлпе, пурпа, кăмрăкпа усă кураççĕ.

Çуллахи вăхăтра колхоз сыснисене ферма валли ятарласа уйăрса панă выранта çÿретнĕ. Унăн пысăккăшĕ 11,5 гектар. Унта клевер, вика акнă. Çывăхрах вăрман, юханшыв. Сыснасене курăк çинче пăхнă, шывра çунă, сулхăмра выртарнă. Курăксăр пуçне сыснасене туранă вĕлтрене пĕçернĕ çĕрулмипе, çăнăхпа хутăштарса панă. Вĕлтрен сыснасене пыр чирĕпе чирлесрен сыхлать.

Хальхи вăхăтра сыснасем фермăра рене пĕçернĕ çĕрулмипе, çăнăхпа хуранра тĕрлĕрен апат пĕçерсе çитереççĕ.

Фермăра 3 свинарка. Вĕсем кашни хăйсене çирĕплетсе панă сыснасене пăхаççĕ. Анчах çимĕçĕсене пурте пĕрле пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Возчик В. Краснов шыв тата çимĕçсем турттарса парать.

Кунти работниксем пурте пĕр кăмăлпа ĕçлеççĕ, пĕр-пĕрин сăмахне итлеççĕ, пĕр-пĕрне пулăшаççĕ. Опытлă свинарка Вазикова юлташ вĕрентнипе ĕçлекен Ермакова Мария кăçал хăйне панă плана 10 сысна ирттерсе тултарнă. Çамрăк свинарка Марфа Салдакеева та унтан юласшăн мар.

Пурте пĕр çын пек ĕçленине пула, ферма 1943 çулта сыснасем ĕрчетмелли плана виçĕ хута яхăн ирттерсе тултарнă. Çулталăк вĕçне планпа 110 çăвăр пулмалла пулсан, халĕ вăл хисепрен 61 çăвăр ытларах. Унсăр пуçне кăçал ĕрчетнĕ çăвăрсенчен 202 пуç колхозниксене сутнă, темиçе пуç государствăна панă. Колхозниксене килĕрен пĕрер пуç сысна туянтарнă.

Кăçал фермăн кашни амаран вăтамран 12 çăвăр илмелле пулнă. Фермăри 23 амаран октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех 275 çăвăр илсе, сыснасем ĕрчетмелли плана виçĕ уйăх малтан тултарнă. Кăçал çăвăрланă çăвăрсенчен пĕтĕмпе те 4 пуç кăна вилнĕ, вĕсем те сусăр çуралнăскерсем пулнă. Свинаркăсем алла илнĕ çăвăрсене сухатмаççĕ, мĕн пулсан та, пăхса çитĕнтереççĕ. Çавăнпа вĕсен фермi хунавлă та мухтавлă.

Халĕ çак хунавлă ферма хĕле хатĕрленет. Витесен кантăкĕсене лартнă, шăтăк-çурăксене питĕрнĕ. Ферма работникĕсем хăйсем тума пултарнă ĕçсене йăлтах тунă.

Т. ИВАНОВ.
«Çĕнĕ Юнга» колхоз, Сĕнтĕр районĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

НТ 1862 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 84 п. л.